ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

18 (4484) №, 2016, май (çу), 12

1931 çулхи январĕн (кăрлачăн) 12-мĕшĕнче тухма тытăннă

Хакĕ ирĕклĕ

Индексĕ: 54802

ХАСТАРСЕМ

## Уйрăлми тăвата тус



**Варя Скворцова, Вика Кузьмина, Юля Кузьмина, Наташа Андреева – пĕр класри туссем. Пурте спортра тата вĕренӳре çитĕнӳсем тăвас тесе тăрăшаççĕ.**

– Çавăн пекех мана питĕ-питĕ футбол, волейбол вăййисем килĕшеççĕ. Туссемпе яланах мечĕк хыççăн хăвалатпăр. Уйрăмах çулла урамри ăмăрту кăмăла çĕклет. Бокс та кăмăла каять, анчах ку енĕпе секци тавраш çукран пултарулăхăма аталантарма май килмест. Хăй вăхăтĕнче атте те спортпа вăйлă пулнă, – тет мал ĕмĕтлĕ Варя Скворцова.

– Варя пекех, эпĕ те футболшăн, волейболшăн тунсăхлатăп. Çавăнпа физкультура урокĕсене чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Стадиона тухсан хама çил ачи пек туятăп. Хирĕç вылякансенчен мечĕк туртса илсе хапха еннелле ыткăнатăп, – йăл кулса пуплет Вика Кузьмина.

– Юрра-ташша юратнăранах «Шăпчăксем» ансамбле кăмăлтанах çӳретĕп. Ăна Галина Геннадьевна Степанова ертсе пырать. Пултарулăхне кура эпир те ун пек пулма тăрăшатпăр. Ӳкерес туртăм та пысăк. Çын сăнне сăнӳкерчĕке пăхса кăларатăп. Уйрăмах шурă хут çине çут çанталăка сăнлатăп. Унăн кашни вăхăчĕ хăйне евĕр илемлĕçке. Куçа илĕртекен вăрман-ката, ем-ешĕл уй-хирпе çаран, хĕвел шевлипе йăлтăртатакан пĕве-кӳлĕ, таврана çутăлăх парнелекен уйăхпа çăлтăрсем кирек кам чунне лăпкăлăх парнелеме пултарнине пурте пĕлетпĕр. Авă, писательсемпе поэтсем те ытларах çут çанталăка сăнлаççĕ. Кĕнекери сăнарсем, йывăç-курăкпа, хурт-кăпшанкăпа е çил ачисемпе калаçнине кам вуламан-ши? – шухăша кайса сăмах çăмхине сӳтет Наташа Андреева.

Суякан, икĕ питлĕ тата сăмаха çилпе вĕçтерекене пĕрре те кăмăлламасть Наташа. Çавăнпа полици ĕçченĕ пулас шухăш канăç памасть ăна.

Юля Кузьмина сăвва илемлĕ вулама ăста. Ăмăрту-конкурсра яланах малти вырăна йышăнать. Юратнă поэт – Сергей Есенин. Унăн тарăн шухăшлă сăввисен кĕнекине кирек хăш та вăхăтра та алла илме тăрăшать.

– «Шăпчăксем» ансамбле çӳрени те кăмăла çĕклет. Ара, эпир кирек хăш ăмăртуран та çĕнтерӳпе таврăнатпăр вĕт! Маншăн юрă-ташă – чун уççи. Юрламасăр, ташламасăр пурăнаймастăп эпĕ, – пĕтĕмлетет хăй шухăшне хастар пике.

Туссем ĕнтĕ çуллахи каникула чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Çитменнине кантăкран кĕрекен хĕвел шевли кашни кун урама тухма йыхрав тăвать...

*Элиза ВАЛАНС.*

Комсомольски районĕ,
Çĕнĕ Мăрат.

**Çырăнтару – 2016**

**"Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ**

**çу 12–22: вунăкунлăх акци**

*"ХЫПАР" – 669 тенкĕ те 66 пус (индекс В4800)*
*"ХЫПАР-эрнекун" – 309 тенкĕ (индекс В8353)*
*"ТАНТĂШ" – 240 тенкĕ те 18 пус (индекс В4802)*
*"ТЕТТЕ" журнал – 135 тенкĕ те 18 пус (индекс В3771)*
*"САМАНТ" журнал – 170 тенкĕ те 64 пус (индекс В3208)*

# Ӑнӑҫлисем Раҫҫей конкурсӗнче тупӑшӗҫ

**Нумай пулмасть МЧС тытӑмӗнчи Пушар хуралӗн ҫулталӑкне халалланӑ «Неопалимая Купина» Пӗтӗм Раҫҫейри ача-пӑчапа ҫамрӑксен пултарулӑх конкурсӗ вӗҫленчӗ. Вӑл Раҫҫей МЧСӗн республикӑри тӗп управленийӗ, ирӗклӗ пушар обществи тата ЧР Вӗренӳ министерстви пулӑшнипе иртнӗ.**



Конкурса республикӑри вӑтам тата интернат шкулсенче, ӳнер студийӗнче, пултарулӑх ҫуртӗнче вӗренекенсем хутшӑннӑ. Тӳресем пурӗ 200-е яхӑн ӳкерчӗк, алӑ ӗҫӗ, макет пӑхса тухнӑ. Ӗҫсене виҫӗ номинацире хакланӑ: илемлӗ ӳнер пултарулӑхӗ, декорацие ӗҫлев пултарулӑхӗ, пултарулӑхӑн техника тӗсӗсем. Вӗсене ачасемпе ҫамрӑксен ӳсӗмне кура 6-10, 11-14, 15-18 ҫулсенчисене уйӑрӑммӑн тишкернӗ.

Ҫӗнтерӳҫӗсене Шупашкарти Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ ҫамрӑксен театрӗнче чысларӗҫ. Вӗсем 69-ӑн, унсӑр пуҫне ушкӑнпа хатӗрленӗ виҫӗ ӗҫ те малти вырӑна тухрӗ. Хастарсенчен хӑшӗ-пӗрине паллашар.

«Декорацие ӗҫлев пултарулӑхӗ» номинацире 15-18 ҫулсенчисен хушшинче Ҫӗмӗрле районӗнчи Мӑн Улхаш шкулӗнче 9-мӗш класра вӗренекен Никита Федоров /ертӳҫи – Л.В. Федорова/ 1-мӗш вырӑн ҫӗнсе илчӗ. Вӑл пластмасса савӑтсемпе хытӑ хутран пушар хуралӗн самолечӗн макетне ӑсталанӑ.

– Конкурс валли интереслӗ те хӑйне евӗрлӗ япала хатӗрлеме шут тытрӑм. Тӗллеве кӗске вӑхӑтрах пурнӑҫларӑм. Манӑн ӗҫ ҫӗнтерӳҫӗсен йышне кӗнишӗн питӗ хӗпӗртетӗп, тӑрӑшни сая каймарӗ, – пӗлтерчӗ МЧС ӗҫченӗсем иртерекен тупӑшусене ҫулсеренех хастар хутшӑнаканскер.

Унӑн ентешӗ 8-мӗш класри Ксения Медведева ҫак номинацирех 11-14 ҫулсенчи ачасен хушшинче 1-мӗш вырӑна тухрӗ. Хӗрачан «Виҫӗ сысна ҫури» юмах тӑрӑх «Ачасемшӗн шӑрпӑк – вӑйӑ мар!» тӑварлӑ чустаран хатӗрленӗ ӗҫӗ пур енӗпе те пысӑк хака тивӗҫ пулчӗ.

Вӑрмар районӗнчи Энӗшпуҫ шкулӗнче 7-мӗш класра вӗренекен Катя Васильевӑпа 5-мӗш класри Кристина Николаева 1-мӗш тата 3-мӗш вырӑнсене ҫӗнсе илчӗҫ. Катя «Пултарулӑхӑн техника тӗсӗсем» номинацире пушар хӑрушсӑрлӑхӗ тематикипе пуҫватмӑшпа стенд хатӗрленӗ. Ку ӗҫре ӑна Оксана Николаевна Васильева ертӳҫӗ пулӑшса пынӑ. Стенд ҫинче – хӑйсен ентешӗсен, вут-кӑварпа хастар кӗрешсе пуҫ хунӑ пушарнайсен сӑнӳкерчӗкӗсем. «Вӗсен ячӗсене пирӗн яланах асра тытмалла», – палӑртрӗ хӗрача.

Кристина ҫак номинаци валлиех «Йӑл кулсам, ҫӑлавҫӑ» видеоролик хатӗрленӗ. Унта пушарнӑй пурнӑҫӗнчен илнӗ тӗрлӗ саманта сӑнланӑ. «Йывӑр ӗҫ кунӗ хыҫҫӑн киле таврӑнсан кӑшт каннӑ вӑхӑтра пӑхма видеоролик хатӗрлес кӑмӑл ҫуралчӗ, – ӑнлантарчӗ Кристина ӗҫӗпе паллаштарса. – Кӑмӑла ҫӗклеме хавасларах сӑнӳкерчӗксем те кӗртме тӑрӑшрӑм».

Конкурсри кашни ӗҫ хӑйне евӗрлӗ те илемлӗ, ӑнӑҫлӑ. Вӗсене чунтан тӑрӑшса туни туйӑнать. Чи лайӑххисене Раҫҫейри конкурсра тупӑшма Мускава ӑсатӗҫ.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

## Асра юлакан самант

Ачалӑх – асра юлакан самант. Час-часах аслисенчен: «Ачалӑх мӗн тери илемлӗ вӑхӑт!» – тенине илтетӗн.

Паян эпӗ ачалӑх самантӗнче пурӑнатӑп. Мӗншӗн «самантӗнче»-ха? Ҫак асамлӑ вӑхӑт сисмесӗрех иртет-ҫке. Выляса-кулса, савӑнса кунран кун иртнине те асӑрхамастпӑр. Часах пирӗн урӑх пурнӑҫ пуҫланӗ: экзаменсем тытмалла, ӗҫе вырнаҫмалла, ҫемье ҫавӑрмалла… Ҫавӑн чухне ҫеҫ эпир ачалӑх хыҫа юлнине ӑнланса илӗпӗр.

Юлташсемпе тантӑшсене ҫак ырӑ та ҫутӑ вӑхӑта усӑллӑ иртterme сӗнетӗп.

***Лена ИВАНОВА.***

Етӗрне районӗ,
Кивӗ Тинкеш шкулӗ.

# Ҫӗнтерсен мачча ҫӳллӗш сикме хатӗр

**Йӑл кулӑллӑ Андрей Сыкин... Ҫав тери сӑпайлӑ, ырӑ кӑмӑллӑ, «5» паллӑсемпе ҫеҫ вӗренет, ҫут ҫанталӑка чунтан юратать. Кӑҫал ҫиччӗмӗш класран вӗренсе тухать вӑл.**

– Ку таранччен нихӑҫан та, никама та кӳрентерни пулман унӑн. Ҫын ҫине сассине хӑпартмасть. Кирек камран та ун пирки ыррине ҫеҫ калание илтме пулать. Пӗлесчӗ сирӗн, хӗрачасем епле хисеплеҫҫӗ ӑна! Ара, Андрей пек хастара епле кӑмӑлламӑн? «Пирӗн Андрей маттур та пултаруллӑ, вӑл темле сӑлтава пула шкула килеймесен – унсӑр тунсӑх та кичем. Районти, республикӑри олимпиадӑсенчен ҫӗнтерӳпе таврӑнсан эпир хӗпӗртенипе мачча ҫӳллӗш сикме хатӗр», – теҫҫӗ. Вӗренӳре лайӑх ӗлкӗрсе пыраканскертен тус-юлташӗ час-час пулӑшу ыйтать. Хирӗҫлемест вӑл. Май килнӗ таран вӗсене ҫӑмӑллӑх туса паратех, – ыррине ҫеҫ калаҫҫӗ Андрей пирки шкулти педагогсем те.

Андрей вӑрҫӑ ҫинчен кӗнекесем шӗкӗлчеме юратать. Вуласа тухсан кирек кама унӑн содержанийӗпе паллаштарать. Паян та авӑ тусӗсемпех вӑл. Калаҫать те, калаҫать. Пӗр чарӑнми, пӗр ывӑнми.

– Фронтри пурнӑҫ кашниншӗн вӑрӑм пулнӑ. Сехетпе те, кунпа та шутласа кӑларма хӗнтерех. Сахал-и, нумай-и – тӑватӑ ҫула яхӑн. Тӑван ҫӗршывӑн телейлӗ кун-ҫулӗшӗн ҫапӑҫса пирӗн салтаксем нумай терт-нуша курнӑ, – терӗ те юлашкинчен шухӑша путрӗ.

Унтан ассӑн сывларӗ. Сӑмахӗ пӗтрӗши вара, мӗн вуланине йӑлтах каларӗши?.. Тем асне килчӗ-ха. Куҫӗ пӑхать хӑйӗн, анчах ҫывӑхра ларакансене курассӑн туйӑнмасть. Унтан, ыйхӑран хаваслӑн вӑранса кайнӑ пек, куҫӗ йӑлтӑртатрӗ, вара юнашар вырнаҫнисене выляса та йӑл-йӑл кулса кӑтӑкласа илчӗ.

– Мӑн мӑн асаттесемпе кукаҫисем, асаннесемпе кукамайсем нимӗҫсене тӗп туса пире телейлӗ пурнӑҫ парнеленӗ. Ҫавӑнпа ак паян та хаваслӑ эпир. Вылятпӑр, кулатпӑр, кӑмӑлпа шкулалла чупатпӑр. Атте-анне ҫунатти айӗнче лӑпкӑ пурӑнатпӑр. Час-часах тӳпене ялтӑртатса хӗвел шуса тухать авӑ. Чи кӑмӑлли – ӑшшине пурин ҫине те пӗр пек сапалать. Тата мӗн кирлӗ пире кунтан ытла? Сывлӑх ҫеҫ пултӑрччӗ, ытти йӑлтах хамӑртан килет. Пурнӑҫӑн анлӑ сукмакӗпе тӗрӗс-тӗкел ҫеҫ утасчӗ, – терӗ Андрей.

***Луиза ВАСИЛЬЕВА.***

Улатӑр районӗ,
Кивӗ Эйпеҫ.



Тантӑш
чӑваш ачисен хаҫачӗ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви; Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство ҫурчӗ» Чӑваш Республикин хӑй тытӑмлӑ учрежденийӗ.

● ХАҪАТ ИНДЕКСӖ:
54802 - (ҫур ҫула) – Чӑваш Республикинче

● Редакципе издатель адресӗ:
428019, Чӑваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство ҫурчӗ" АУ техника центрӗнче калӑпланӑ. "Чувашия" ИПК" АО типографийӗнче пичетленӗ.
428019, Чӑваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРӖ:
Тел.: 64-24-01

● ДИРЕКТОР - ТӖП РЕДАКТОР
М.М.АРЛАНОВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тӗп редактор: 56-00-67
редактор, ҫырусемпе
тата юнкорсемпе ӗҫлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайӗ: 28-85-69
спорт тата экологи пайӗ: 56-11-80
право, кӑмӑл-сипет пайӗ: 28-83-89
факс: (8352) 28-83-70
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВҪИ
Л.ВАСИЛЬЕВА

● КАЛӐПЛАВҪӐ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1290 экз.

● ЗАКАЗ
№ 1612
Пичете ҫу уйӑхӗн 11-мӗшӗнче алӑ пуснӑ.

● ПИРӖН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантӑш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓡ паллӑпа реклама материалӗсене палӑртнӑ

Пичете графикпа 15 сехетре алӑ пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алӑ пуснӑ.

*Аслă Çĕнтерӳ уявне пĕтĕм халăх чаплăн паллă турĕ. Хĕвеллĕ те янкăр тӳпе уявсен уявне пуханнă кашни çын чунчĕринче мăнаçлăх туйăмĕ çуратрĕ. Тăван çĕршыва ирсĕр тăшманран ирĕке кăларнă, фашиста тĕп тунă ветерансене саламланипе пĕрлех ăшă çанталăк та хăйĕн лăпкă пăшăлтатăвлĕ çилĕпе вĕсене савăнтарчĕ. Хисеплĕ ветерансем ачисемпе, мăнукĕсемпе, мăнукĕн мăнукĕсемпе пĕрле пулса праçникре çамрăк ăрăва телейлĕ пурнăç парнеленишĕн хĕпĕртерĕç. Шел, хаяр вăрçă вăхăтĕнче Аслă Çĕнтерĕве çывхартнисен шучĕ кунсерен чакса пырать. Упрасчĕ вĕсене! Ăшă сăмахпа та пулин чĕрисенче хаяр вăрçă хăварнă нихăçан сипленми суранĕсене çăмăллатма тăрăшасчĕ! Чыс та мухтав Çĕнтерĕве çывхартнисене!*

# Çĕнтерĕве халалласа

Аслă Çĕнтерӳ пулнăранпа 71 çул çитрĕ. Çак уява халалласа шкулта нумай тĕрлĕ мероприяти йĕркелерĕç. Çăмăл атлетсем те кроса тухса хăйсен спортри çитĕнĕвĕсемпе паллаштарчĕç. Пур вĕренекен те хутшăнчĕ унта. Тĕрлĕ дистанцире ăмăртрĕç çамрăк спортсменсем.

Кĕçĕн класра вĕренекенсем хушшинче Вика Матьяновăна çитекен пулмарĕ. Вăл пĕрремĕш вырăна тухса пурне те савăнтарчĕ. Иккĕмĕш класри Ульяна Тятькова вара иккĕмĕш вырăнпа туссен ăшă сăмахне илтме тивĕçрĕ.

Арçын ачасенчен Кирилл Кудрганов чи маттурри пулчĕ. Стас Ухтеринов тата Даниил Васильев иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайларĕç.

Çĕнтерӳçĕсене пурне те Тав хучĕсемпе тата парнесемпе хавхалантарчĕç.

Аслă Çĕнтерĕве халалланă кросс ăнăçлă иртнишĕн кашни савăнчĕ.

*Ульяна АНДРЕЕВА, 3-мĕш класс вĕренекенĕ.*



Шупашкар районĕ, Ишек шкулĕ.
**САНӲКЕРЧĔКРЕ:** эпир старта хатĕр!

# Куççульпе аса илчĕç



Кадетсем мĕнпур çамрăк пекех Тăван çĕршыва ирсĕр тăшманран хăтарнă ветерансемпе мухтанаççĕ. Уявра Шупашкарти 14-мĕш кадет шкулĕн 1 «в» класс вĕренекенĕсем çĕнтерӳçĕсемпе тĕл пулчĕç. Леонид Ефимович Ефремов тата Апполинария Ивановна Ефремова çамрăксене кăмăлпа йышăнчĕç. Вăрçă çулĕсене аса илчĕç, хăрушă кунсене тепĕр хутчен куç умне кăларчĕç. Леонид Ефимович нумай орденпа медале тивĕçнĕ. Ачасене кашнине мĕншĕн пани çинчен каларĕ. Кадетсем нумай çĕннине пĕлчĕç ветерансем патĕнче. Вĕсен кашни ыйтăвне туллин хуравлама тăрăшрĕç хисепе тивĕçлисем. Куççульпе аса илчĕç хăрушă кунсене. «Текех вăрçă нихăçан та ан пултăрччĕ», – тесе уйрăлчĕç икĕ ăру çыннисем.

*Калиса ЯКОВЛЕВА, вĕрентекен.*

Шупашкар,
14-мĕш кадет шкулĕ.
**САНӲКЕРЧĔКРЕ:** ветеранпа – асăнмалăх сăнӳкерчĕк.

## «Çар открытки» акци пĕтĕмлетĕвĕ

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 71 çул çитнине халалласа ЧР ачасемпе çамрăксен библиотеки ака уйăхĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 9-мĕшĕччен «Çар открытки» акци ирттерчĕ.

Çуркуннепе пĕрле кашни киле, кашни çемьене Çĕнтерӳ уявĕ килсе кĕрет. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин асаплă çулĕсем пирĕнтен инçерех те инçерех юлса пыраççĕ. Анчах çав çулсен тискерлĕхне курнă мăн асатtesемпе асаннесем çинчен нихăш çемье те манмасть. Тăван çĕршывшăн çапăçса пуç хунисене, вăрçăпа тыл ветеранĕсене çынсем асрах тытаççĕ.

Республика акцине Элĕк, Патăрьел, Красноармейски, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав, Вăрмар, Çĕрпӳ, Шупашкар, Шăмăршă, Етĕрне, Елчĕк районĕсенчи; Канаш, Çĕмĕрле, Шупашкар хулисенчи вулакансем, вĕрентекенсемпе библиотекарьсем хутшăнчĕç – пĕтĕмпе 350 çын 400 ытла открытка хатĕрленĕ.

Акцире Шупашкарти 106-мĕш «Кораблик» ача садне çӳрекенсем /воспитателĕсем – Юлия Иванова тата Наталья Козловская/, «Эпĕ асамçă мар-ха, вĕренетĕп кăна» клуб хастарĕсем /ертӳçи – Татьяна Терентьева/, 49-мĕш шкулти 7-мĕш класс вĕренекенĕсем /вĕрентекенĕ – Людмила Никифорова/, 37-мĕш шкулти 1-2-мĕш класс ачисем /вĕрентекенĕ – Алевтина Кузьмина/, 17-мĕш шкулти 3-мĕш тата 7-мĕш класс вĕренекенĕсем / вĕрентекенĕ – Ираида Павлова/, Экономикăпа технологи колледжĕн студенчĕсем /преподавателĕ – Светлана Шарова/, 36-мĕш шкул вĕренекенĕ Дима Шангараев, Куславкка районĕнчи Тĕрлемес салинчи «Василек» ача сачĕн воспитателĕ Ольга Сидоркина тата Шупашкар хулинчи çамрăксен правительствин ĕçченĕсем палăрчĕç.

Пур открыткăна та Чăваш ӳнер музейĕн хальхи искусство центрĕнче, Шупашкарти Калинин районĕнчи халăха социаллă пулăшу паракан центрта, Трактор тăвакансен культура керменĕнчи уяв концерчĕ умĕн, вăрçă ветеранĕсене тата тыл ĕçченĕсене, Ленинград блокадине тӳссе ирттернисене, фашист тыткăнне лекнисене тата вăрçă ачисене парнеленĕ.

Ветерансен тав сăмахĕсем библиотека ĕçченĕсене татах та хавхалантарчĕç. Акцие хутшăнакансен сăмахĕсене илсе парас килет: «Эпир ас тăватпăр, юрататпăр, хаклатпăр!!!», «Чун-чĕререн Сире çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, сывăх çынсен пулăшăвĕпе тимлĕхне сунатпăр! Сирĕн çемьере яланах тăнăçлăхпа ăнăçу хуçалантăр». Тавах сире пуç çийĕнчи лăпкă тӳпешĕн!!!

*Татьяна ЗАХАРОВА.*

# Пĕрремĕш хут парада!

**Аслă Çĕнтерӳ кунне халалласа Шупашкарти Хĕрлĕ лапамра ирттернĕ çак парад республика историне ылтăн тĕспе çыранса юлчĕ. Кунта иккĕмĕш хутчен шкул çулне çитмен ачасемпе çамрăк çарçăсем хутшăнчĕç. Унта 106 ача садĕнчен пин çура яхăн арçын ачапа хĕрача, юнармеецсен 59 ушкăнĕ утса тухрĕ. Вĕсен ашшĕ-амăшне, ветерансене Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов ăшшăн саламлăрĕç.**

Пирĕн халăх историне çĕнĕрен пачах урăхлатса çырма шухăшланисен ĕмĕчĕ пурнăçланманнине пĕлтерчĕ. Республика Пуçлăхĕ Михаил Васильевич Игнатьев. Раççейре Тăван çĕршывшăн тăшмана хирĕç кар тăнисем пирки пурте пĕлнине тепĕр хутчен каларĕ. Çавăн пекех вăл маттур ачасем çитĕнтерекен ашшĕ-амăшне чĕререн тав турĕ.

Парада Шупашкарти 106-мĕш «Кораблик» ача сачĕн воспитанникĕсем усрĕç. Вĕсем хыççăн ытти ачасем, çамрăк çарçăсем сумлăн та патваррăн утрĕç.

Тăван çĕршывăн пулас патриочĕсем çак парадра кăна мар, ытти мероприятире те маттур пулни питех те савăнтарать. Парада Раççейри ача-пăча полици академийĕн ĕçченĕ отставкăри полковник Сергей Чехов ертсе пычĕ. «Пирĕн çамрăк ăру компьютер умĕнче ларса çеç вăхăта ирттермест, нумай олимпиадăра, ăмăртура пултарулăхĕпе палăрать». Çакăн çине уйрăмах пусăм туса каларĕç пуханнисем.

Парад хыççăн çамрăк ăру Республика Пуçлăхĕпе асăнмалăх сăн ӳкерĕнчĕ.

*Олег МАЛЬЦЕВ сăнӳкерчĕкĕ.*



**● АННЕНЕ ПУЛĂШАТĂП**



## Хăвăрт «беляш»

**Чуста валли:**
**2 стакан йӳçĕтнĕ сĕт,**
**çур чей кашăкĕ апат соди, тăвар, сахăр,**
**çăнăх кирлĕ.**
**Ăшĕ валли:**
**аш арманĕпе авăртнă какай,**
**ыхра,**
**сухан,**
**тăварпа пăрăç,**
**кăштах апат соди тата сахăр кирлĕ.**

Йӳçĕтнĕ сĕте 28-30 градус таран ăшăтмалла. Апат соди, тăвар, сахăр хушса пăтратмалла. Хыççăн пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çăнăх ямалла. Чуста икерчĕ валли хатĕрленĕ пекрех пулмалла: ытла çăра та, шĕвĕ те мар. Какая вĕтетнĕ ыхрапа, суханпа тата тăвар-пăрăçпа хутăштармалла. Ăна чустапа пĕр пек виçепе илсе пĕрлештермелле. Лайăх пăтратнă хыççăн çу янă хĕртнĕ çатмара ăшаламалла.

## Мексиканла хатĕрленĕ рагу

**Çимĕç валли:**
**500 грамм шăмминчен уйăрнă чăх какайĕ,**
**2-3 помидор, пылак пăрăç, кишĕр,**
**350 грамм консервланă куккурус,**
**çавăн чухлех хĕрлĕ шалçа пăрçи /фасоль/,**
**2 пуç сухан,**
**тăвар,**
**ыхра,**
**ӳсен-тăран çăвĕ,**
**вĕтетнĕ Чили пăрăçĕ кирлĕ.**

Сухана çурма çаврашкаласа, кишĕре тăваткалласа ваклăр. Пылак пăрăça вăрринчен тасатса улăм пĕрчи евĕр турăр. Помидора вăтам татăксем туса касăр. Çимĕçсене çу янă хĕртнĕ çатмара ăшалăр. Хыççăн шывне сăрхăнтарнă консервланă куккуруспа шалçа пăрсине хушăр. Тăварпа чей кашăкĕн иккĕ виççĕмĕш пайĕ чухлĕ Чили пăрăçĕ, вĕтетнĕ ыхра ярса пăтратăр.

Пысăках мар татăксене ваклансă чăх какайне те пахчаçимĕçсемпе пĕрлештерĕр. Савăта хупласа вунă минут пăшăхлăр. Апачĕ тутлă пултăр!

**● ХАМĂР ХУШĂРА**

# Мĕне пĕлтерет-ши тĕлĕк?

**Тепĕр чухне кăсăклă та хăйне евĕрлĕ тĕлĕк куратпăр. Унăн пĕлтерĕшне ăнланма та кăткăсрах. Çакна ансатлатас тĕлĕшпе тĕлĕке кĕнĕ хăш-пĕр япалан вăрттăнлăхне уçăмлататпăр.**



**Тĕлĕкре чей ĕçни пурнăçри пăтăрмахсене, ĕç-хĕл аталанăвĕ вăрахланнине пĕлтерет. Чей пĕçерни – юлташсемпе тĕл пуласса. Вăхăта кăмăллă, анчах усăсăр ирттеретĕр.**

Ӳкерчĕк хайлакан ӳнерçе куртăр-тăк – кăмăллă çынпа паллашатăр. Художник вырăнĕнче эсир-и? Апла çывăх вăхăтрах тĕллевсене пурнăçлама май тупăнĕ.

**Тортпа сăйланни – хăнана йыхравласса. Унта апачĕ те, пуххăнисем те чаплă, илемлĕ пулĕç.**

Телефон курни е вăл шăнкăртатнине илтни палăртнă тĕллпулу шухăшланинчен пĕлтерĕшлĕрех пулассине асăрхаттарать. Телефонпа шăнкăравларăр-тăк, пăшăрхантаракан ыйтăва татса парасси иккĕленӳллĕ.

**Палăк – ĕç ăнăçлă пурнăçланасса. Кăмăллă улшăнусем кĕтеççĕ.**

Вăрманти уçланкăри тăнăç кӳлĕ – çывăх вăхăтрах шанчăклă тус тупасса.

**Шăши курни асăрханмаллине пĕлтерет. Юлташсен хушшинче сире ăмсанаканни, усал сунаканни пур.**

## Сĕнӳсем

◆Яшка пĕçернĕ чухне ыхрана юлашкинчен ямалла. Хатĕр яшкаран лавр çулçине кăларма ан манăр.

◆Катлет валли хатĕрленĕ какая çăмарта вырăнне çĕрулми крахмалĕпе хутăштарма юрать. Çур килограмм аш валли икĕ кашăк крахмал кирлĕ.

◆Томат пастине сивĕтмĕше лартас умĕн çиеле кăштах ӳсен-тăран çăвĕ ярăр. Ун пек вăл пăнтăхмĕ.

◆Хуппипе пĕçернĕ пахчаçимĕçе кăштах сивĕ шывра тытсан тасатма çăмăлрах пулать.

◆Макарон пиçекен савăта пĕр чей кашăкĕ ӳсен-тăран çăвĕ хушăр – çимĕçсем пĕр-пĕрин çумне çыпăçмĕç.

◆Сĕте эмаль витнĕ савăтра вĕретмелле мар.

◆Çăмарта шуррине алюмини савăтра лăкасан ăна тĕксĕм тĕс çапать.

◆Пур апат-çимĕçе те пиçес умĕн çеç тăвар хушмалла.

**● ИЛЕМ КĔТЕСĔ**

# Çӳç çăра пултăр тесен



Сайра çӳçе хуăнлатма килте хатĕрленĕ маскăсем пулăшаççĕ. Вĕсем «сывăракан» çӳç тымарĕсене /волосяная луковица/ вăратаççĕ. Çавăн йышши маскăсенче юн çаврăнăшне лайăхлатмалли япаласем пулмалла. Сăмахран, горчица порошокĕ, пăрăç настойки, сухан, тăвар, пыл.

Хăш-пĕр маска рецепчĕпе сире те паллашма сĕнетпĕр. Икĕ çăмарта саррине вĕтетнĕ хĕрлĕ пăрăçпа лайăх хутăштарăр. Пуçа типтерлĕн сĕрсе 40 минут тытăр. Хыççăн лайăх çуса ярăр та çӳçе ятарлă бальзам сĕрĕр.

Пĕр кашăк типĕ горчица порошокне пĕр çăмарта саррипе, пĕр чей кашăкĕ сахăрпа тата пĕр кашăк йӳçĕтнĕ сĕтпе е хăймапа пĕрлештерсе лайăх пăтратăр. Хутăша пуçа сĕрĕр. Алшăллипе чĕркĕр те 15 минут тытăр. Маска ӳте кăштах пĕçертме пултарать. Çакна чăтаймасан çӳçе палăртнă вăхăтран маларах çуса тасатăр.

**● ĂСТА АЛĂ**

# Хамăр алăпа – илемлĕ сулă

Пластик савăтран интереслĕ капăрлăхсем хатĕрлеме пулать. Сăмахран, хитре, витĕр курăнакан, çутă тĕслĕ сулă. Ăна ăсталама пушă пластик савăт, линейка, маркер, хачă, фломастер /ун ăшĕнчи сăрра вĕрсе кăларма тивет/, спрей евĕрлĕ акрил лакĕ, канцеляри çĕççи, утюг кирлĕ.

Линейкăпа тата маркерпа усă курса



пластик савăт çинче сулă сарлакăшне паллă тăвăр. Канцеляри çĕççипе е çивĕч



хачăпа ункă касса кăларăр.

Ĕç вырăнне кирлĕ мар хут сарăр та



хатĕр çаврашкана унта куçарăр. Хăвăра килĕшекен тĕслĕ фломастер илĕр. Сăррине вĕре-вĕре ункăн шал енне сăрлăр.

Сăрра акрил лакĕпе сирпĕтсе çирĕ-



плетĕр.

Хыççăн утюга «иккĕ» режим çине



лартса хĕртĕр. Пластик унка утюг тĕпĕ çумне тытса, тĕрлĕ еннелле çавăрттарса хĕррисене кăштах ирĕлтерсе лапчăтăр.

Пластик сивĕнсен сулă хатĕр.



Страницăна Нина ЦАРЫГИНА (тел. 56-11-80) хатĕрленĕ.

## КАЛАРĂШСЕМ

◊Эсĕ чечеке – пĕртен-пĕрскере, урăх нихăш çăлтăр çинче те çукскере – юрататăн пулсан çакă çителĕклĕ: тӳпене пăхатăн та хăвна телейлĕ туятăн. «Таçта манăн чечекĕм пур», – тесе савăнатăн.

◊Тен, çак тĕнчере эсĕ этем кăна пуль, анчах такамшăн эсĕ – пĕтĕм тĕнче.

◊Суя юрату вăл – юратма пĕлменни мар, тӳрккеслĕх.

◊Юрату ăнăçу пекех – хăйĕн хыççăн чупнине кăмăлламасть.

◊Эпир пурнăçа мĕншĕн юрататпăр? Çук, пурăнма хăнăхнăшăн мар, юратма хăнăхнăшăн.

◊Юратушăн уйрăлу – çулăмшăн çил пекех: пĕчĕк юратăва сӳнтерет вăл, пысăккине тата вăйлатса ярать.

◊Эсĕ юратаканни тата сана юратаканни – пĕр çын мар.

◊Юрату – пĕчченлĕхрен тармалли чи ăнăçлă меслет.

◊Сана юратăççĕ пулсан эсĕ ним пирки те иккĕленместĕн. Хăв юратнă чухне вара иккĕленӳ хăех çуралать.

◊Эсĕ чăннипех юрататăн пулсан юлташусем кун пирки мĕн каланине те илтместĕн.

◊Хĕрсем «юрататăп» сăмаха шăппăн тата пĕр илемлетмесĕр каланă чухне кăна ĕненеççĕ.

◊Тĕлпулу тата уйрăлу саманчĕсем кăна чĕрере мĕн чухлĕ юрату пуррине кăтартса пареççĕ.

◊Юрату лĕпĕш пек: питĕ хытă пăчăртасан – лапчăтатăн, вĕçертсе ярсан – тытаймастăн.

ШĂПА

# Паян пĕри, ыран тепри…



*Пĕрле пулни,*
*Телей сунни,*
*Сана-çке кирлĕ мар,*
*Кирлĕ мар.*

Çакă юрă Ольăн пусĕнчен тухма пĕлмест. Темле хăтăлас тесен те кашни самантрах янăрать пек вăл, телейсĕр юратăва аса илтерет. Çавăнпа хĕр минтере ыталаса куççуль тăкать.

Юрату. Мĕнле туйăм-ши вăл? Мĕншĕн асаплантарать çамрăк чĕресене? Оля çак туйăм авăрне улттăмĕш класра кĕрсе ӳкрĕ. Савнă çынни хăйĕнчен висĕ çул аслăрахчĕ. Хăп-хăмăр куçлă, хура çӳçлĕ, илемлĕ каччă тыткăнларĕ хĕр чĕрине. Ваньăна пĕрре курсанах çĕр тĕпне анса кайма хатĕрччĕ. Пĕррехинче каччă клубра ун патне пычĕ те ташлама чĕнчĕ. Хĕр имене-именех тухрĕ. Çак самантра ташланăн мар, вĕçнĕнех туйрĕ вăл хăйне. Анчах часах «çĕр çине таврăнма» тиврĕ ун. Хĕр уншăн çуннине сисмерĕ каччă. Тепĕр кунне урăх хĕре ташша чĕнчĕ, тепрехинче – тата урăххине. Оля çакна чăтма пултараймарĕ, ĕсĕкле-ĕсĕкле чупрĕ килне.

Халĕ Оля хулара вĕренет. Унăн çĕнĕ тусем, паллакансем. Апла пулин те вăл малтанхи юратăвне манаймасть. Урăх каччăпа калаçма шутламасть те, Ваня таврăнасса кĕтет. Пĕлет-çке кĕтме пĕлекенсем телейлĕ пуласса. Ольăн та телей курас килет.

**РОЗА.**

Патăрьел районĕ.

● КУН ÇЫРĂВĔНЧЕН



Хитре хĕрачасене пурăнма çăмăл тетĕр-и? Суя! Хитре хĕрачасем тунсăх мĕнне те пĕлмеççĕ тетĕр-и? Тĕрĕс мар! Хитре хĕрачасене мĕн кирлине пĕтĕмпех туянса пареççĕ тетĕр-и? Пачах та апла мар! Хитре хĕрачасем хыççăн арçын ачасем чупаççĕ тетĕр-и? Çук! Хитре пулни кăна çителĕксĕр çав…

**ЛИЛЕЧКА.**

Эпĕ сана юрататăп. Мĕншĕн-ха эсĕ мана курмастăн? Эпĕ сана палламастăп, анчах санпа сывлатăп. Сана курсанах – таратăп. Куççуль тетрадь çине пĕр вĕçĕмсĕр тумлать…

**НАДЮША.**

Ачасем, «Кун çырăвĕнчен», «Паллашу кĕтесĕ» темăсемпе пирĕн vk.com сайтри **«Тантăш-Тетте-Самант»** ушкăнра /**vk.com/tantashsem/** ятарлă калаçусене хутшăнма пултаратăр. Çамрăк чун-чĕрене мĕн пăшăрхантарать-ха? Çырса пĕлтерĕр.

# Чăн-чăн юрату

Кӳлĕ хĕрринче илемлĕ Лили ӳснĕ. Çак чечеке усал шухăшлă Авăр асăрханă та кирек епле майпа та ăна хăйне пăхăнтарма тĕллев лартнă. Унăн чĕрине çĕнсе илме темĕн те шухăшласа кăларнă.

– Лили, атя сана хамăн мăнаçлă хумсем çинче ярăнтарам! Питĕ хаваслă пулĕ!

– Лили, куратăп, çуллахи шăрăх çанталăк сана хытах асаплантарать. Манăн сана уçă сывлăш, сулхăн парнелес килет…

Илемлĕ Лили пусне çавăрсах янă вăл. Инçех те мар Нăрă пурăннă, вăл çепĕç чечеке чĕререн юратнă. Анчах Лили ăна асăрхаман. Чун сунтармăшĕ усал Авăр патне туртăннине туйсан Нăрă ăна çапла каланă:

– Хаклă Лили, тархасшăн, ан итле ăна, вăл сана пĕтересшĕн вĕт!

Анчах Лили ĕненмен:

– Нăрă, мĕн юмахĕ каласа паратăн эсĕ мана? Кур-ха, Авăр епле вăйлă, хитре, асамлă… Унăн сăмахĕсене хирĕçлеме пултараймастăп эпĕ.

– Çапла, эппин? – тарăхса кайнă Нăрă. – Эсĕ ăна ĕненсен санпа мĕн пулассине халех кăтартам…

Чечеке чĕререн юратакан харсăр Нăрă çавăнтах Авăра чăмнă. Самантрах çухалнă вăл, ĕмĕрлĕхех. Тинех Лили чăн-чăн юрату мĕн иккенне ăнланса илнĕ.

ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ



Эпĕ Дима ятлă, 15 çулта, хаваслă та ырă каччă. Юлташланма кăмăл пуррисем пурте ман пата **vk.com** сайтра çырăр: **https://vk.com/dimmamyasnikov.**

ЧУНРИ

# Тусăма мĕнле çăлас?



Юлташăма мĕнле пулăшмаллине пĕлместĕп ĕнтĕ. Юрату авăрне путнăскере унтан епле туртса кăларасши? Пĕлетĕп, юратма пĕлекенсем телейлĕ, анчах… Хамăн чи сывăх тусăма савнийĕнчен мĕнле сивĕтем-ши? Лена Игорьшăн чунне пама хатĕр, анчах çав йĕкĕт унран кулать çеç, пĕр каçра кама кăна ăсатмасть пулĕ. Çапах тусăм уменче: «Сана çеç юрататăп», – тесе ĕнентерет. Икĕ уйăхра пĕрре пырать Игорь Лена патне. «Каçар, вăхăт сахал», – тесе тӳрре тухать ун пек чух. Пĕррехинче чăтаймарăм: «Пăрах çав путсĕр яш çинчен шухăшлама. Урăххи пур унăн», – терĕм тарăхса. Тен, апла каламан та пулăттăм, хăй ман умра куççуль тăкса ларнăран персе ятăм. Хăвăрăнне хăвăр пĕлĕр тесе алă сулса çаврăнса утнă пулăттăм та – Ленăна шел. Вăл манăн чи сывăх юлташ.

Пĕррехинче тантăшăм вăйпах çыру тыттарчĕ. «Пулăш, тархасшăн, çакна мĕнле те пулин Игорь патне çитер», – терĕ хурлăхлăн. Хирĕçлемерĕм. Анчах çырăвне вуламасăр чăтаймарăм.

«Хаклă çыннăм! Манăн шанчăка ан аркатсам. Кĕтсе ывăнтăм сана. Хушăран кĕске самантлăха та пулин тĕл пулма май тупсамччĕ. Унсăрăн, ĕненсем, ытла йывăр мана. Тӳсейместĕп унашкал инкеке», – çапла вĕçленĕ вăл кĕске çырăвне. Чĕринче мĕн пуррине чăнласах çырнă иккен.

«Хĕрсем ытла айван-мĕн. Кăшт лайăх калаçсанах çу пек ирĕлеççĕ. Питĕ кирлĕ мана санăн Лену», – терĕ Игорь мăнкăмăллăн çак йĕркесене вуласа тухсан.

Хама çав тери тарăхрăм. Ленăн çырăвне мĕншĕн тыттартăм-ха ăна? Чĕрем чул пек хытрĕ, ним калама пĕлеймерĕм. Çакăн пек путсĕр çамрăкшăн куллен куççуль кăларать Лена. Çыру пирки каласа парсан каллех макăрчĕ. «Ахалех ан кулян-ха, ак кăштахран урăххине тĕл пулăн», – лăплантартăм ăна. Çук, итлемест мана. Унăн чĕри никама та йышăнма пултараймасть имĕш. Ним калама та пĕлеймерĕм. Мĕнле пулăшмалла-ши Ленăна?

**АНЯ.**



# Пуç хунă тăвансене пĕлмеллех

**Аслă Çĕнтерӳ совет халăхĕшĕн питĕ хаклаларнă. Вăрçă пырса тивмен çемье çĕршывра çук та пуль. Пин-пин салтак шăпи халĕ те паллă мар.**

Паян та вăрçăра пуç хунă салтаксен вил тăприйĕсене шырас ĕç малалла пырать. Çĕршыв хӳтĕлевçисен ячĕсене историе хывса хăварас ĕçе йĕркелес тата «Никама та манман, нимĕн те манăçман» лозунга пурнăçлас тĕлĕшпе РФ Президенчĕ тĕрлĕ йышăну тата хушусем кăларать. Пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсенчен пĕри – РФ Хӳтĕлев министерстви йĕркеленĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕршыва тăшманран ирĕке кăларнă салтаксен, вăрçăра вилнисен, хыпарсăр çухалнисен пĕтĕмлетнĕ даннăйĕсен электрон банкĕ.

Çак проект миллион çынна харпăр хăй тăван-пĕлĕшĕ, çывăх çыннисем пирки, вĕсене ăçта пытарнине пĕлме пулăшать. Çакна хамăн тĕслĕхсемпе çирĕплетсе калама пултаратăп. Нумаях пулмасть Интернетри электрон банка кĕрсе архиври официаллă документсен тăрăх кукаçин вăрçăран таврăнайман икĕ пиччĕшĕ пирки пĕлме тӳр килчĕ.

Сăмах май, манăн кукаçи Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Серенкасси ялĕнче йышлă çемьере çуралса ӳснĕ. Çут тĕнчене 1936 çулта килнĕскер, çемьери тăхăр ачаран саккăрмĕшĕ пулнă. Унăн ашшĕпе амăшĕ, Акулина Васильевнăпа Александр Егорович Бахметьевсем /аннен асламăшĕпе аслашшĕ/, вăрçă хирне тăватă ывăлне ăсатнă.

Пĕрремĕш ывăлĕ, Ерофей Александрович Бахметьев, 1918 çулта çуралнăскер, Çĕнтерӳччен пилĕк кун кăна пурăнса çитереймен иккен. Документсен тишкерĕвĕнчен вăл связист пулни, 1945 çулхи кăрлач уйăхĕн 15-мĕшĕнче хĕрӳ çапăçура вăйлă аманса госпитале лекни палăрчĕ. Йывăр сурансене пула вăл çав кунах вилсе кайнă. Унăн вил тăприйĕ – Калининград облаçĕнчи Первомайски салинче.

Тепĕр ывăлĕ, Иван Александрович Бахметьев, 1925 çулта çуралнăскер, çарта кĕçĕн сержант пулнă. 1944 çулхи ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче Волынск облаçĕнче хыпарсăр çухалнă.

1919 çулта çуралнă Николай Бахметьев Минск хулине ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă. Вăл çак хулари ашшĕамăшĕсĕр, кил-çуртсăр тăрса юлнă Катя ятлă хĕре тăшманран çăлса хăварнă. Вăрçă хыççăн унпа пĕрлешсе Минск хулинчех пурăннă. Вăрçăра хытă аманнă Коля пиччене ача-пăчаллă пулма пӳрмен. Мăшăрĕпе иккĕшĕ те 1980 çулта вилнĕ.

1923 çулта кун çути курнă Александр Бахметьев та хаяр çапăçусенче пулнă. Анчах фронтра нумай аманнă пулсан та тăван киле çаврăнса çитнĕ. Вăрçă хыççăн Туканашра пурăннă, ветеринари фельдшерĕнче ĕçленĕ. 1985 çулта вилнĕ. Ачи-пăчи çук. «Санька пичче вăрçăран суранланса таврăннă», – тет анне. Сайра-хутра хăйĕн çинчи суран выранĕсене, орден-медаль çакнă пиншакне шкапран кăларса ачасене кăтартнă. Ăна ялан тăхăнман. Тата унăн калаçăвĕнче час-часах «Тăван çĕршывшăн!», «Тăван çĕрĕм» йышши сăмахсем илтĕнсе тăнă. Харсăрлăхпа палăрнă вăл, сакăр нимĕçе пĕччененех тыткăна илни те пулнă. Документсемпе паллашсан ăна нумай награда панине пĕлтĕмĕр, ăçта мĕнле паттăрлăх кăтартнине те çырса пĕлтернĕ. Питĕ лайăх та кăсăклă информаци.

Çапла РФ Хӳтĕлев министерствин /пурте кĕрсе пăхма пултаракан даннăйсен банкĕ/ «Подвиг народа в Великой Отечественной войне 1941-1945 гг./ сайчĕ кукаçин пиччĕшĕсен кун-çулне уçăмлатма пулăшрĕ. Харсăр каччăсем пулнă вĕсем, сахал мар орден-медале тивĕçнĕ. Архивра нумай çул выртса сарăхнă документсене те унта PDF мелĕпе курма пулать. Мĕнле наградăсем тата мĕншĕн илнине йăлтах çырса кăтартнă. Вуланă май тăвансем паттăррăн çапăçнăшăн мăнаçлăх туйăмĕ тыткăна илет.

Унсăр пуçне аннен кукашшĕ пирки те кăшт пĕлме тӳр килчĕ. Егор Николаевич Елгайкин 1908 çулта çуралнă. Районти çар комиссариачĕ ăна 1942 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче вăрçа янă. Çав çулах, авăн уйăхĕнче, мăн кукаçи хыпарсăр çухалнă. Мăн кукамай тăватă пĕчĕк ачапа тăрса юлнă, мăшăрĕнчен вăл пĕтĕмпе те виçĕ çыру илсе вуланă.

Пĕр çырăвĕнче çапла çырнă пулнă: «Хамăн çи-пуçа Сорăм ялĕнчи çынран парса ятăм. Вĕсенчен ачасене кĕпе-йĕм çĕлесе пар. Наçтаç, ачасене лайăх пăхса çитĕнтер, ан хĕне, выçă ан усра…»

Ват кукамай мăшăрĕн сăмахĕсене пурнăçланă. Икĕ ывăлпа икĕ хĕре тĕрĕс-тĕкел ӳстерсе çын тунă, выçлăх çулĕсенче те выçса вилме паман, шкула çӳретме тăрăшнă. Темĕнле йывăр пулсан та ĕне тытнă, фермăра ĕçленĕ.

Çапла, вăрçă пырса тивмен çемье пирĕн çĕршывра çук та пуль. Ялти культура керменĕ умĕнчи палăк хăми çинче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисен ячĕсем нумай. Вĕсенчен çиччĕшĕ – Бахметьев хушаматлисем. Каламасăрах паллă: вĕсем – пирĕн тăвансем. Телейлĕ пурнăç парнеленĕ ентешĕмĕрсемпе тăванăмăрсене пирĕн, çамрăк ăрăвăн, пĕлмеллех. Паттăрсене асра тытасси – пирĕн тивĕç.

***Алиса ЗАМУТКИНА,***
***8-мĕш «б» класс.***
Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Хĕрлĕ Чутай шкулĕ.

# Пирĕн шкулта – чаплă хăнасем

Чăваш чĕлхи кунне республикăра анлă уявларĕç. Мăн Этмен шкулĕ те айккинче юлмарĕ. Çак уява паллă тума палăртнă кун пирĕн пата республикăмăрăн тĕп хулинчен хисеплĕ хăнасем килсе çитрĕç: Чăваш халăх çыравçи Юхма Мишши, «История великого народа» фильм продюсерĕ тата режиссерĕ Юрий Михеев, Юрий Сергеев.

Хăнасене авалтан пыракан ырă йăлапа килĕшсе çăкăртăварпа кĕтсе илчĕç. Фойере чăваш халăхĕн историйĕ çинчен калакан пĕрремĕш фильм экспозицине кăтартса панă тата шкул ачисем тĕрлĕрен мастер-классирттерчĕç. Акт залĕнче Юхма Мишши кĕнекисен куравĕ уçăлчĕ.

Уяв «Алран кайми аки-сухи» юрăран пуçланчĕ. Вĕренекенсем çыравçăн сăввисене пăхмасăр каласа пачĕç. Мероприятие педагогика ĕçĕн ветеранĕ, Чăваш Енри Писательсен союзĕн членĕ, Мăн Этмен шкулĕн директорĕ пулнă А.П.Трофимов малалла тăсрĕ. Тĕлпулăва хатĕрленсе вăл ятарласа илемлĕ сăвă çырнă, ăна чунтан хавхаланса вуласа пачĕ. Çак шкултанах вĕренсе тухнă Юрий Георгиевич Михеев вара чăваш халăхĕн историйĕ çинчен калакан пĕрремĕш фильма мĕнле ӳкернине пĕлтерчĕ. Юхма Мишшипе Юрий Сергеев та сăмах илчĕç, шкулта хăйсене ăшă кăмăлпа йышăннăшăн тав турĕç, тепре килме те кăмăл пуррине палăртрĕç. Шкулти истори вĕрентекенĕ Н.И.Полозин хăнасене Мăн Этмен шкулĕ çинчен çырса кăларнă кĕнекине парнелерĕ.





Кайран шкулĕпех «История великого народа» документлă илемлĕ фильм курчĕç. Çак фильма пăхсан пире мĕншĕн чăваш тесе чĕннине ăнланма пуçлатăн. Халăх историне питĕ кăсăклă уçса парать вăл.

«История великого народа» фильма наци концепцийĕ пек йышăннă, вĕренӳ учрежденийĕсенче кăтартма сĕннĕ. Пĕтĕм чăвашсен «Эпĕ – патриот» акципе килĕшӳллĕн кăçалхи ака уйăхĕн 25-мĕшĕнчен пусласа ăна Шупашкарти «Три пингвина» кинотеатра курма пулать.

Мероприяти вĕçĕнче шкул ачисем хăнасемпе асăнмалăх сăн ӳкерĕнчĕç.

***Татьяна ГОРБУНОВА.***
Хĕрлĕ Чутай районĕ,
Мăн Этмен шкулĕ.

# Вăрçă калавĕсем

Александр ИЛЬИН



## Васук салтака каять...

Васук пиччĕшĕ Петĕр паян вăрçа каять. Ăна ăсатма пĕтĕм ял халăхĕ пухăнчĕ. Тулта хĕвеллĕ çанталăк тăрсан та çынсен пит-куçĕнче савăнăç шевли вылямасть. Васук кăна хавасла. Вăл, кăçал тăвата çула кайнăскер, ăнланмасть çынсем мĕншĕн кулянниине, савăнăçлăн чупкалать кăна. Амăшĕ патне пычĕ те: «Анне, эпĕ те салтака каятăп», – терĕ. Амăшĕ пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Васук асламăшне ыталаса илчĕ те: «Асанне, эпĕ те салтака каятăп», – терĕ. «Ах, ачам, ачам…» Урăх нимĕн те калаймарĕ ватă çын. Кăнтăрлапа кӳршĕри Матви пичче лашана тăрантас кӳлсе килчĕ. Вăл унпа Петĕре Михайловка станцине ăсатать. Пӳрт тулли халăх. Петĕрпе юлташĕсем салтак юрри юрлаççĕ. Унăн хулпуççийĕсем çине урлăн çыхса вуншар алшăлли çакса янă. Вăхăт хăвăрт шăвать. Кăнтăрла та иртсе кайрĕ. Матви пичче пурне те:

– Атьăр, урама тухар, çула тапранма та вăхăт, – тесе каласан пӳртри чылай çын макăрма пуçларĕ. Петĕре амăшĕ ыталаса илчĕ те, ывăлне пĕр утăм та тутармасть, хăй чуна çурасла макăрать. Ăна çынсем хулран тытрĕç, унтан пурте урама тухрĕç. Васук тăрантас çине хăпарса ларчĕ, хăй вĕçĕмех:

– Эпĕ те салтака каятăп! – тет.

Ял халăхĕ уй хапхинчен тухсан чарăнчĕ. Петĕр хумханать. Хăй çавах хумханнине палăртасшăн мар:

– Сывă юлăр, тăвансем, ял-йыш! Кĕтĕр вăрçăран çĕнтерӳпе таврăнасса!..

Çаксем пулчĕç ял халăхĕн Петĕртен илтнĕ юлашки сăмахсем. Вăл юлташĕсемпе пĕрле юрă юрласа ячĕ:

Вĕç, вĕç, куккук, вĕç, куккук,
Вăрман хĕрне çитиччен…

Матви пичче Петĕре ыталаса илчĕ те: «Ачам, уйрăлма вăхăт çитрĕ», – терĕ.

Петĕр тăрантас патне пычĕ те Васука ун çинчен антарма тăчĕ, анчах та ача:

«Анмастăп, пичче, эпĕ те санпа пĕрлех салтака каятăп», – терĕ те макăрса ячĕ…

Таврăнаймарĕ вăрçăран Петĕр. Унăн ашшĕ Йăван пичче те вăрçă хирĕнчех выртса юлчĕ.

Васук çитĕнсен салтака кайрĕ. Аслă çар пĕлĕвĕ илчĕ каярах. Вăл халь – генерал. Астăвать-ши хăй тăвата çулта чухнех пиччĕшĕпе пĕрле салтака кайма тăнине?

## Каçхи таран

Çуллахи каç. Çурçĕр çывхарса пырать. Тӳпене çăлтăрсем сырса илчĕç. Уйăх курăнса кайрĕ. Вăл тӳпе такани çинче шăппăн чӳхенет. Таврара та шăпах. Анчах та çак шăплăх ултавлă. Нумай та вăхăт иртмерĕ, самолет сасси илтĕнме пуçларĕ. Тăшман самолечĕн кĕрлевĕ. Çав самантрах прожекторсем тӳпе анине йĕрлеме тытăнчĕç те бомбардировщике асăрхарĕç. Икĕ моторлă самолет каçхи хула çине бомбăсем пăрахма вĕçет. Унăн летчикĕ кĕтмест халь çурçĕр çитесçе тӳпе пирĕн самолетпа тĕл пуласса. Анчах та пĕр кĕтмен çĕртенех хĕрлĕ çăлтăрлă истребитель тăшман çулне пӳлсе лартрĕ. Вăл, тин кăна сывлăшри урăх çапăçура хăйĕн снарячĕсемпе пульлисене персе пĕтернине пăхмасăрах, хула енчен вĕçсе килчĕ те тӳрех тапăнчĕ. Истребитель бомбардировщик çывăххнех вĕçсе пычĕ. Çакна кĕтмен бомбардировщик летчикĕ хăрамаллипех хăраса ӳкрĕ. Вăл истребительтен уйăрласшăн. Анчах та тăрăшни усăсăрах. Истребитель тепĕр хутчен бомбардировщик патнелле ыткăнчĕ. Тем хушăра унăн сылтăм çунатне пропеллерĕпе хачăпа каснă пек касса та татрĕ. Бомбардировщик сывлăшра урлăпирлĕ çаврăнма пуçларĕ те, часах çĕра хура тĕтĕм кăларса çывăхри вăрман çине ӳкрĕ. Пулмарĕ бомбардировщикĕн пирĕн хула çине бомбăсем пăрахасси.

Çирĕп иккен истребитель пропеллерĕ, кăшт çеç авăнчĕ вăл бомбардировщикăн çунатне касса татнă чухне. Истребитель хамăрăн аэродрома чиперех вĕçсе çитрĕ. Полк командирĕ летчика ыталаса илчĕ те:

– Тавтапуç сана тараншăн, чаплă тараншăн, – терĕ.

Летчиксем вара ăна ырласа тата мухтаса çав самантран «Таран» тесе чĕнме пуçларĕç.

Чăнах та тивĕçчĕ вăл çак ята.

## Вăрçă ачисем

Çуллахи уяр кунсенче эпир, ялти вĕт-шакăр ача-пăча, тусан çинче выляма юрататпăр. Вăл мамăк пек çемçе. Пирĕн шавлă ушкăн паян та тусан çинче, алра кашниннех теттесем: тимĕр ункă, кукăр-макăр патак татки. Вĕсемпе тусан вĕçтерме аван. Эпир тата урама кăкăрсем çине çакса аттесем вăрçăран таврăннă медалĕсене илсе тухатпăр. Манăн висĕ медаль, Ванюкăн та виççĕ, Петĕрĕн тăваттă, Васукăн пилĕк медаль. Микулайăн çеç пĕр медаль те çук. Медальсем çакса салтаксем пек юрласа утма пире питĕ лайăх. Çав вăхăтра вĕсем хĕвелпе тĕкĕр пек йăлтăртатаççĕ. Хамăр хаваслă. Паян та çаплах. Пĕр Микулай кăна ушкăнран уйăрлса тăчĕ те хыттăнах сасăпа макăрма тытăнчĕ. Чарăнмасăрах. Мĕншĕн?..

Пирĕнтен икĕ çул аслăрах Петĕр:

– Эпĕ пĕлетĕп Микулай макăрнин сăлтавне, – терĕ те хăйĕн пĕр медальне вĕçертсе унăн кăкăрĕ çине çакрĕ. Эпир те Петĕре кура çаплах турăмăр. Халь Микулайăн та кăкăр тулли медаль. Вăл макăрма чарăнчĕ, ахăлтатсах кулать.

Каярахпа Петĕр пире Микулайăн ашшĕ Сталинград патĕнче тăшманпа паттăрла çапăçса вилни çинчен пĕлтерчĕ. Çавăнпа ачан медальсем çуккин сăлтавĕ пулнине ăнлантарчĕ. Çак кунран пуçласа эпир Микулая вĕçĕмех хамăр медальсене алра тытма паратпăр. Епле савăнăçлă вăл! Курасчĕ сирĕн…

## Ватă снайпер

Петĕр пиччене, хăй темиçе хутчен ыйтсан та, вăрçа чылайччен илсе каймарĕç. Çар комиссариатĕнче те ăна кашнинчех: «Эсир ватă», – тесе киле каялла тавăрса яратчĕç. Çапах та 1942 çулхи июнь уйăхĕнче вăл фронта кайрех. Аллăри арçын Сталинграда хӳтĕлекенсен йышне кĕрет. Командирсем ăна çулланнă тесе ротăри кухньăна вырнаçтараççĕ. Лашапа ĕçлеме. Ĕç нумай унăн. Вăл кунта кулленех вутă, шыв, апат-çимĕç турттарать. Хăй повар мар пулсан та салтаксене вăхăтра апат çитересси унран та нумай килнине лайăх ăнланать ватă салтак. Ăна ротăра пурте Петр Иванч тесе чĕнме тытăнчĕç. Командирсем те. Хăнăхрĕ вăл хăйне çапла чĕннине.

Петĕр пиччен ротăри пĕрремĕш командирĕ Михайлов старшина. Вăл хĕрĕх çулти Çĕпĕр çынни. Иккĕшĕ çывăх туслашрĕç. Ватă салтак старшина хушнă пур ĕçе те вăхăтра туса пырать. Паян старшина ăна çывăхри ялтан вутă турттарса килме задани пачĕ. Вут-шанкăсăр апат пĕçерейместĕн. Ял пĕр çухрăмра çеç. Çавах унта кайса килме хăрушă. Тӳпере вĕçĕмех тăшман бомбардировщикĕсем сĕрлеççĕ.

Ку таранччен Петĕр пиччене пĕр пульăпа тупă ванчăкĕ те лекменччĕха. Лаши те сывах. Çапла шухăшласа пыратчĕ салтак лав çинче. Сасартăк çывăхрах пĕр вăтăр метрта тăшман бомби ӳксе çурăлчĕ. Унтан татах. Лаша хăраса малалла тапса сикрĕ. Çулсăр мĕнсĕрех вирхĕнтерет. Мĕн тумалла? Бомбардировщик Петĕр пиччепе «выляма» тытăнчĕ: самолет çине-çинех лава перĕнеслех вĕçсе иртме пуçларĕ. Каллех шухăша кайрĕ ватă салтак, халь вăл тăшман летчикне питĕ лайăх курать. Лешĕ кулкалать кăна. «Шăшипе кушак вăййи пекех-çке ку… – калаçать хăйпехăй. – Вăйă вĕçленсен, кушак шăшие çисе ярать. Кунта та çаплах пулĕ», – терĕ те вăл, ерипен, летчик асăрхамалла мар винтовкине хăйĕн умне хучĕ. Акă самолет каллех лава перĕнеслех вĕçсе иртрĕ. Çав самантпа усă курса салтак винтовкăпа бомбардировщике тĕллерĕ.

«Хам çамрăклах лайăх сунарçă пулнине тепĕр хутчен кăтартмах тивет паян манăн», – терĕ те Петĕр пичче бомбардировщик каялла вĕçсе килессе кĕтме пуçларĕ. Лешĕ кĕттермерĕ. Лав патне таврăнса ун тавра явăнма тытăнчĕ. Самолет вĕçсе иртнĕ вăхăтра салтак винтовкине лайăх тĕллерĕ те курока пусрĕ. Шат! турĕ винтовка сасси. Çав самантра пуля бомбардировщикăн бензин бакне пырса та перĕнчĕ. Самолета çулăм явса илчĕ. Ялкăшсах çунма пуçларĕ. Часах çĕре тăрăнчĕ. Çапла вĕçленчĕ «вăйă».

Паттăр салтака Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе чысларĕç, снайпер пулма уйăрса лартрĕç.

Йăнăшмарĕç командирсем: çĕршер тăшман салтакне леш тĕнчене ăсатрĕ вăл. Кухньăра ăна поварпа старшина манмаççĕ. Апата пырсан Петĕр пиччене яланах пысăк аш турамĕ лекет.

Паян та çаплах пулчĕ…

## Салтак санитар

Иванов рядовой – пулеметчик. Вăл Васильев кĕçĕн сержантпа пĕр пулемет расчетĕнче. Вĕсен пулемĕчĕ – икĕ урапаллă «максим». Паян та унпа çапăçăва кĕрсе каччăсем чылай-чылай фашиста леш тĕнчене ăсатрĕç. Анчах та кăнтăрла иртсен Иванова хăйне те тăшман снарячĕн осколкисем хытах амантрĕç те, вăл тăнне çухатрĕ, халь шăн çĕр çинче выртать. Ăна питĕ йывăр, мĕншĕн тесен вăл пĕр харăсах пуçран та, алăпа ураран та аманнă. Чылай вăхăтран салтак тăна кĕчĕ те хăй снарядсем «чавса» хунă тарăн лакăмра выртнине ăнланса илчĕ. Сивĕ. Сурансем туртсах ыратаççĕ. Юр çума пуçларĕ. Пĕрремĕш юр. Лакăмра Ивановпа юнашарах аманнă салтак. Вăл вĕçĕмех: «Анне! Анне!» – тесе амăшне хыттăн чĕнет. Иванов лакăмран тухма тăчĕ, анчах май килмерĕ. Вăл каллех тăнне çухатрĕ. Тăна кĕрсенех: «Вилетĕп вĕт», – тесе шухăшласа куçне хупрĕ салтак. Çав самантрах вăл хăйне такам хулран тĕкнине сисрĕ. Куçне уçрĕ те курах кайрĕ: ун умĕнче санитар тăрать иккен. Вăл Ивановран: «Урусем сывах-и?» – тесе ыйтрĕ.

– Çук, – тавăрчĕ салтак.

– Аллусем?

– Хускалмаççĕ…

– Апла пулсан эпĕ халь сана масхалат çине хуратăп та эсĕ шăлусемпе ăна çак тĕлтен хытă çыртса ларт, – терĕ те Иванов снайпера масхалат çине хурса лазарет еннелле туртса кайрĕ. Çапла çăлса хăварчĕ вăл чăваш каччине вилĕмрен Сталинград патĕнчи пĕр çапăçура.

Ватă салтак санитар çинчен мĕн виличченех ырăпа асăнса пурăнатчĕ. «Шел. Питĕ кулянатăп çавăн чухне унăн ятне ыйтманнишĕн», – тетчĕ яланах Сталинград салтакĕ.

## Сывлăшри çапăçу

Тӳпере тăшман бомбардировщикĕ. Вăл Сталинград еннелле çеçенхир тăрăх утакан хĕрлĕармеецсен колоннисем çине бомбăсем пăрахма пуçларĕ. Анчах та тăшман тӳпере нумай хуçаланаймарĕ. Ун патне хăвăрттăн пирĕн самолет вĕçсе çывхарчĕ те ăна пулеметран та, тупăран та ăшалама тытăнчĕ. Хăй чĕкеç пек вăр-вар. Бомбардировщике вĕçме те памасть. Пур енчен те тапăнать те тапăнать. Пирĕн салтаксем хамăрăннине ăнăçу сунса: «Эсĕ çĕнтеретĕн, çĕнтеретĕн!» – тесе кăшкăраççĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ хăйсем йывăр аманнине те манса кайрĕç. Сывлăшри çапăçу хĕрнĕçемĕн хĕрсе пырать. Тăшман самолечĕ темĕн пек тăрăшсан та нимĕн те тăваймасть пирĕннине. Çапăçма вăйĕ те пĕтрĕ пулас унăн. Истребитель вара ăна сăпса пек сăхма чарăнмасть. Вăл хăйĕн тĕллевне пурнăçларех: бомбардировщик улăм купи пек хыпса илчĕ те хуп-хура тĕтĕм кăларса çĕре шаплатса ӳкрĕ. Çакна курса савăннă салтаксем чылайччен: «Ур-ра! Ур-ра!» – тесе кăшкăрни Сталинград çеçенхирĕнче таçта-таçта çитиех янраса тăчĕ. Çав самантра çĕнтерӳçĕ – Хĕрлĕ Çăлтăрлă истребитель вĕсене çуначĕсене вылятса саламларĕ те нимĕн пулман пекех анаçалла вĕçсе кайрĕ…

**(Малалли пулать).**




# Сăмахкаçмăшсем



**Сылтăмалла:** 5. Карл Маркс «пуянлăхĕ». 7. Пушă. 8. Кĕлетке пайĕ. 9. Пустав. 10. Тӳпери «хунар». 13. Нимсĕр ăна та пĕçереймĕн. 14. Ăна пуйăс сĕтĕрет. 15. Кăмака пайĕ. 16. Савăт-сапа. 21. Ши! кайрăм, пи! кайрăм. 23. Вĕççĕр-хĕрсĕр шыв лаптăкĕ. 24. Суту-илӳ вырăнĕ. 25. Казаксен ялĕ. 26. Чăваш юрăçи.

**Аялалла:** 1. Вăл çĕршыв старости пулнă. 2. Мунча кĕмелли хатĕр. 3. Утă-улăм купи. 4. Çар званийĕ. 6. Хурт-кăпшанкă. 7. Вăхăт палли. 11. Пăтă пĕçермелли хатĕр. 12. Икĕ вĕçлĕ япала. 15. Йывăç тĕпĕ. 17. Кăнтăрти йывăç. 18. Пулă тытмалли хатĕр. 19. Ĕлĕкхи пуян. 20. Ăш хыптармăш. 22. Эсĕ ăна вуласа ларатăн.



**Сылтăмалла:** 5. Пуçне каçăртса çӳрекен кайăк. 6. ... кĕперĕ. 7. Чăваш апачĕ. 11. Самолетсен гаражĕ. 14. Кĕлетке пайĕ. 15. Кăнтăрти йывăç. 16. Çĕршыв тĕрекĕ. 17. Типсе пыракан тинĕс. 18. Çар званийĕ. 20. Пахча-çимĕç. 22. «Хĕн-хур айĕнче» хайлаври сăнар. 26. Республикăри хула. 27. Тинĕс пулли. 28. Арменири сăрт-ту.

**Аялалла:** 1. Тумтир. 2. Ăна пуйăс сĕтĕрет. 3. Савăт-сапа. 4. Африкăри пушхир. 8. Чăваш халăх поэчĕ. 9. Мухтанчăк. 10. Ун пуçĕнче çил вĕрет. 12. Карл Маркс пуянлăхĕ. 13. Тĕвесен ушкăнĕ. 19. Комири хула. 21. Буржуй апачĕ. 23. Унран борщ пĕçереççĕ. 24. «Хĕрлĕ автан». 25. Пирĕн тăрăхри чул.



**Сылтăмалла:** 4. Чăваш апачĕ. 7. Тинĕс пулли. 8. Кĕвĕсен пĕрпеклĕхĕ. 10. Пуçа тăхăнмалли хатĕр. 14. Кримски ... – пуç çути, кĕмĕл çĕрĕ – ал çути, ырă çын – пӳрт çути /каларăш/. 16. Çывăх тăван. 18. Геометри фигури. 19. Пăнтăр-пăнтăр ... 21. Кăнтăрти çимĕç. 23. Вырăс физикĕ, академик. 25. Йĕпреç районĕнчи ял. 27. Х.Уяр романĕ. 28. Шур сухал. 29. Вăтам Азири авалхи хула.

**Аялалла:** 1. Вĕç, вĕç ... /юрăран/. 2. Пĕр-пĕр чиртен сыхланни. 3. Вăтам Азири халăх. 5. Каласан та, каламасан та ... 6. Ăна лаша сĕтĕрет. 9. Ӳнерçĕ ĕçĕ. 11. ... килес капланчĕ /ват. сăм./. 12. Вăрманти «кукша» вырăн. 13. Казаксен ялĕ. 15. Кăнтăрти Анна аппа хули. 17. Хурт-кăпшанкă. 20. Клише, шаблон ... 22. Пистолет, револьвер, ... 24. Суя çӳç. 25. Тамăк мар. 26. Бухенвальд, Дахау ...



**Сылтăмалла:** 1. Унпа тăвайккинчен ярăнаççĕ. 3. Станок пайĕ. 7. Чăваш апачĕ. 10. Испанин футбол команди. 13. Вăл хваттере сыхлать. 14. Пушă. 15. Пулас генерал. 16. Тумтир. 20. Ĕпхӳри хоккей команди – «... Юлаев». 21. Уйăх. 22. Усал. 25. Республикăри район. 26. Çывăрмалли вырăн. 27. Чăваш халăх писателĕ.

**Аялалла:** 1. Республикăри хула. 2. Вĕренӳ çурчĕ. 4. Вĕсен ташшине сцена çинче курма пулать. 5. АПШри штат. 6. Çĕр кăпкалатмалли хатĕр. 8. Мухтанчăк. 9. Р.Сарпи хайланă кĕнеке. 11. Кăнтăрти йывăç. 12. Хурт-кăпшанкă. 17. Раççей гроссмейстерĕ, тĕнче чемпионĕ пулнăскер. 18. Шурлăхри вĕçен-кайăк. 19. Профессор, ЧПУн ректорĕ пулнăскер. 23. Пулас пӳрт. 24. Мăскал, нурат, ...

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) ***хатĕрленĕ.***